Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

62 (7487) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи августăн (вырма) 1-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Вырма – 2007

Çулçă шăпăлтатăвĕ çумăр çуни мар

Яра уяр кунра пĕр арăмĕпе упăшки çурт çумĕнчи ăвăс çулçисем шапăлтатнине çумăр сасси тесе йышăнса кунĕпе майлах вырăн çинчен тăманни пирки вăлтса калакан халăхăмăр юмахне пирĕнтен кашниех пĕлет ĕнтĕ. Философилле тарăн тымар ку юмахра. Кам ĕçе маларах хатĕрленнĕ, уннăн çут çанталăк пулăмĕсем пысăк чăрмав мар. Кам ĕç çине пӳрне витĕр пăхать, унăн ака та юлса пырать, вĕсемшĕн выльăх апачĕ хатĕрлеме те "вăхăт чылай", вырмана та "пĕр-икĕ кунтах ирттерме пулать". Сивĕ хĕлле шăпах çакăн пеккисем юптарури шăрчăк пек килтен-киле çӳреме пуçлаççĕ. Хальлĕхе вара хĕл кунĕсемччен вăхăт инçе-ха...

Район администрацийĕн ял хуçалăх пайне пĕрлешӳллĕ хуçлăхсенчен тăратнă оперативлă кăтартусемпе июлĕн 31-мĕшĕ тĕлне кăçал тырă-пулă акнă 22 ял хуçалăх предприятийĕнчен 8 хуçалăх кăна вырмана тухнă. "Оринино" ял хуçалăх производство кооперативĕ вара кĕске хушăрах 777 гектар çинчи тырăпулăран 117 гектар (82 процент) чухлĕ кĕрхи тулăна вырса илме те ĕлкĕрнĕ. Ĕçсем çавăн пекех Ильич ячĕпе хисепленекен, "Чемеево", "Восток", Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче те ырă туртăмпа вăй илчĕç.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи пĕтĕмĕшле лару-тăру вара çакнашкал: 13551 гектар çинчи тырă-пулăн 2 проценчĕ кăна (256 гектар, йăлтах кĕрхи тулă) йĕтем çине кĕнĕ.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе пĕрлех 12 хресчен (фермер) хуçалăхĕнчен А. Матвеевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ те вырмара малтахни утăмсене ăнăçлă пуçлана: 10 гектар (8 процент) кĕрхи тулăна пуçтарса кĕртнĕ. Ку вăл хресчен (фермер) хуçалăхĕн пĕтĕмĕшле лаптăкĕн 4 проценчĕ. Çав вăхăтрах хресчен (фермер) хуçалăхĕсен харпăрлăхĕнче кăçал 1285 гектар тырăпулă.

Малтанлăха палăртнă тăрăх вăтам тухăç районĕпе 21 центнерпа танлашать. "Хир карапĕсем" хальлĕхе кĕрхи тулă пуссисенче çеç ĕçленĕрен çак культурăн тухăçĕ малтанхи гектарсем çинче "Ударник" хуçалăхра 60 центнерпа, Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче 40 центнерпа, "Свободăра" 30 центнерпа танлашать.

– Уяр çанталăкра типĕ кĕрекен тырăпа ĕçĕ сахалрах та çĕнĕ тырăна йĕтем çинче нумай выртăмастпăр, – теççĕ Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче йĕтем çинчи тырăна аласа-типĕтсе кĕлете кĕртсе хуракансем **(сăн ӳкерчĕкре).**

Мĕнех, ĕçлекенĕн ĕç пĕр вырăнта тăмасть. Хирте вара комбайнсем çаврăм туса вырма хăвăртлăхне ӳстерсе пыраççĕ. Кая юлас марччĕ.

Анатолий БЕЛОВ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Республикăра

Европа Канашĕ пирĕн республикăпа паллашнă

Эрне кун Шупашкара Европа Канашĕн Парламент Ассамблейин Председателĕ Рене ван дер Линден господин килчĕ. Раççейпе паллашмалли визита Чăваш Енрен тытăнмашкăн ăна Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин çĕршывсен хушшинчи ĕçсен комитечĕн председателĕ, "Пĕрлĕхлĕ Раççей" (Единая Россия) политика партийĕн Генеральнăй Канашĕн президиумĕн секретарĕн çумĕ Константин Косачев сĕннĕ.

Визит тĕллевĕ пирки журналистсен ыйтăвне хуравласа Европа Канашĕн Парламент Ассамблейин Председателĕ çапла пĕлтернĕ: "Эпĕ Раççейпе паллашассине Мускава тата Санкт-Петербурга çитсе курнипех çырлахас темерĕм, ытти региона та, çав шутра манăн тус Константин Косачев сĕннĕ сирĕн региона та çитсе курма шутларăм. Ку питĕ палла регион, çав шутра промышленноç аталанăвĕ енĕпе те. Кунта пулма тӳр килнишĕн эпĕ питĕ кăмăллă. Константин мана регион çинчен нумай каласа панă. Вăл çак çĕре питĕ юратать. Эпĕ те кунта килсе курма хаваспах килĕшрĕм."

«Вĕрентӳ» наци проекчĕ

Вĕсем - республикăра чи кăтартуллисем

"Вĕрентӳ" наци проекчĕпе килĕшӳллĕн чи лайăх шкулсемпе учительсене палăртса укçан хавхалантармалли конкурс иккĕмĕш çул пырать. ЧР Президенчĕн грантне панă вĕрентӳ учрежденийĕсем пирки çывăх вăхăтрах пĕлтерме шантарнăччĕ. Паянхи кăларăмра çак пысăк чыса çĕнсе илнисене асăнăпăр. ЧР Президенчĕн грантне тивĕçнĕ ял шкулĕсем хушшинче **Муркаш шкулĕ** пултарулăхпа палăрнă. Çавăн пекех шкул умĕнхи вĕрентӳ учрежденийĕсен педагогика ĕçченĕ Муркашри 3-мĕш ача садĕнче вăй хуракан **Оксана Прокопьева** пысăк хисепе тивĕçнĕ. Вĕсен пултарулăхне укçан преми парса хавхалантарĕç. Тивĕçнĕ преми вĕрентӳ тытăмне аталантарма, пурлăхпа техника никĕсне çирĕплетме каймалла. Пултаруллă педагог вара чысланă укçапа хăйне май усă курĕ.

Çитес çулсенче конкурсантсен йышĕ ӳсессе, пулăшу татăх çивĕчрех пуласса шанас килет.

ХАМĂР ИНФ.

«Радиохум – хаçат страницинче: мĕнле пурăнатăн, ял тăрăхĕ?»

«Пирĕн çынсем шывсăр лармаççĕ»

Кирек епле ыйтăва та май килнĕ таран вырăнтах татса пама пулать. Халăх ыйтнине ял тăрăхĕн администрацийĕнче "илтмĕш" пулмасан. Пĕр-пĕрне ăнланса пĕр тĕллевпе тăрăшсан, нумай çĕрте час-час тĕл пулакан проблема та татăлнине Юнкă ял тăрăхĕнче пурăнакансем хăйсен опытĕнченех лайăх пĕлеççĕ. Тĕслĕхрен, шыв ыйтăвнех илер-ха. Паян кунта никам та шывсăр антăхмасть: хĕлле те, 30 градус шăрăхра та.

Проблеми вара, шывпа çыхăнни, кунта темиçе çул каяллах сиксе тухнă. 2003 çулта "Новая Юнга" хуçалăх саланнă хыççăнах. Кам тивĕçтерĕ ĕнтĕ шыв башнисене электричествăпа? Тĕрĕсрех каласан, кам саплаштарĕ çав тăкаксене? Ахлатса хаш! сывланипех ыйту татăлмасть. Çавăнпа та Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С. В. Ермаков çак ыйтупа "Чăваш Республикинчи электроэнергипе тивĕçтерекен компани" акционерсен уçă обществин хамăр районти филиале çырупа тухать. Акă, мĕнле аса илет паян çав вăхăта Сергей Васильевич:

–Вырăнта кашни башня валли электросчетчиксем тата кашни башня валлиех çутă кĕнеки илсе ĕç-пуçа йĕркелеме калаçса татăлтăмăр, – çав кĕнекесене старостăсене валеççе патăмăр.

Çапла майпа ку ыйту пĕчĕккĕн хăй вырăнĕнчен тапраннă. Малалла вара ĕçпуç çакăн пек аталаннă. Старостăсем кашни уйăхрах, уйăхра мар пулсан, кварталтах башньăна ĕçлеттерме мĕн чухлĕ электроэнерги тухса кайнине кăтартакан счетчик кăтартăвне çырса илеççĕ. Кашни килте миçе çын пурăннине, мĕнле выльăха мĕн чухлĕ тытнине кура тивĕçлĕ расценкăсем тăрăх укçа пуçтараççĕ. Çапла майпа Юнкă тăрăхĕнче пурăнакансем шыв ыйтăвне хăйсемех татса параççĕ.

Паллах, пĕр кунта пулакан япала мар çакă. Укçа йывăррăн пуçтарăннă вăхăтсем те пулман мар. Халăхпа ăнлантару ĕçне ирттерме вăхăт та, пĕр чĕлхе тупма пĕлни те кирлĕ. Кашни çыннăн тата хăйĕн характерĕ. Чи пахи – пуçланă ĕçе вĕçне çитерни. Ултă башньăри ултă счетчика та çапла пăхса тăраççĕ.

Пĕчĕккĕн халăх йăлтах хăнăхса çитет: шывсăр ларас мар тесен, хăйсенех тăрăшмалла. Насус улăштармалла-и е юсамалла – пĕр туртăкаланмасăрах укçа пуçтараççĕ. Колонкăсене те хăйсемех пăхса тирпейлесе тăраççĕ. Шкулпа ача сачĕ те айккинче юлмасть (шыв унта та кĕрет-çке). Кӳршĕсене тата "Моргаушская" строительство организацийĕ те автокрана йӳнĕпех усă курма паратчĕ. Самай пысăк пулăшу ку та. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ ĕç пӳлĕмĕнче хускалмасăр ларсан кран мар, пĕр пус укçа та хăй тĕллĕн килмест. Кашни ялтах çапла татса параççĕ шыв ыйтăвне. Кăпасри 2, Юнкăри 2, Юнкăпуçпе Пĕрремĕш Май выççăлккинчи пĕрер скважинăран шыв килсе тăрать. Пĕтĕмпе 6 скважина. Ку ял тăрăхне кĕрекен тепĕр виçĕ ялĕнче: Коминтерн выççăлккинче, Çармăçкассинче, Ĕлкинра вара çăлсемпе усă кураççĕ.

Йĕркене, тирпее хăнăхнă ку тăрăхри халăх çăлсене те хăех пăхса-тытса тăрать.

–Пĕлтĕр-кăçал бюджет укçи-тенкинчен çĕнĕ çăлсем те турăмăр, – паллаштарать лару-тăрупа С. В. Ермаков. – Тимĕр-бетон кăшăлĕсем те йӳнех мар: 25 пин тенкĕлĕх туянтăмăр. Тепĕр 3 ял валли илмелле. Çав шутран Юнкăри Явăльня урамĕ валли те.

... Халĕ вара шыв колонкисем патне каялла таврăнар-ха. Унти шывпа усă курнăшăн çапла 1-2 çул счетчик кăтартăвĕсемпе тӳлесе пурăннă хыççăн пурнăçри улшăнусем çĕнĕ мел шырама хистерĕç.

Акă, мĕнле каласа парать кун пирки ял тăрăхĕн пуçлăхĕ:

–"Энергосбытсăр" пуçне тата "Энергобаланс" организацийĕ "сиксе тухрĕ". Иккĕшне те счетчик кăтартăвĕсене тăратас пулать. Çитменнине "Энергобалансĕ" килĕшӳ ыйтма пуçларĕ. Йывăр ыйтупа Сергей Васильевич район администрацийĕн пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен пайне килет. Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕнче вара кунти шывпа тивĕçтермелли система объекчĕсене Мăн Сĕнтĕрти çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ çине куçарни çинчен калакан йышăну тăваççĕ. Çакă Юнкăсене лăштах! сывласа яма май пачĕ. Харăсах темиçе йывăр ыйтăва татса пачĕ. Çав 6 скважина проектне тума та 370 пин тенкĕ кирлĕ пулнă. Çĕнĕ скважина проекчĕсем татах та хаклăрах. Тата техусловине илесси миçе тенке кайса ларать. Укçине ăçтан тупмалла? Ку пĕрре.

Тепĕр енчен, шывпа тивĕçтермелли объектсене ĕçлеттерме лицензи мĕн укçипе илмелле? Ял халăхĕнчен укçа пуçтарса лицензи илме çук вĕт. Тĕрлĕрен ытти документсене хатĕрлесе тата мĕн чухлĕ укçа тухса каять. Лицензи вара çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн хăйĕнех пур.

(Вĕçĕ 4-мĕш стр.).

Партисен пурнăçĕнчен

Вырăна тухса ирттерчĕç

"Единая Россия" политика партийĕн Муркаш районĕнчи политканашĕ хăйĕн ларăвĕнче тĕрлĕ ыйтусене пăхса тухать. Çак кунсенче вăл ларусене вырăна тухса ирттерни пĕлтерĕшлине палăртрĕ. Çакă ял тăрăхĕсенчи пуçламăш организацисен ĕç-хĕлĕпе тĕплĕнрех паллашма май парать. Иртнĕ тунти кун вара черетлĕ лару Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче пулчĕ. Пĕтĕмпе унта 4 ыйту пăхса тухрĕç.

Пĕрремĕш ыйтупа "Единая Россия" политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн вуниккĕмĕш отчетпа суйлав конференцин ĕçне пĕтĕмлетрĕç. Асăннă политика партийĕн пирĕн районти уйрăмĕн политканашĕн секретарĕн çумĕ Н. П. Петрова асăннă конференцин йышăнăвĕсене пурнăçа кĕртесси çинче чарăнчĕ.

РФ Патшалăх Думин депутатĕсен суйлавĕ пулать кăçал. Ана тĕплĕн хатĕрленсе ирттермелле. Çавăнпа та "Единая Россия" политика партийĕн выränти уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ А. Н. Иванов шăпах иккĕмĕш ыйтупа суйлав умĕнхи задачăсем пирки каларĕ.

Политканаш членĕсем "Единая Россия" политика партийĕн Уйкас Янасалти пуçламăш уйрăмĕн кăçалхи çур çулхи ĕçне те тишкерчĕç. Асăннă партин членĕсен йышне ӳстерессипе кунта тата çине тăрарах ĕçлемеллине палăртрĕç.

"Единая Россия" политика партийĕн вырăнти ĕçтăвкомĕн ертӳçи А. Ф. Корнеева кăçал асăннă партие кĕртессипе епле ĕçлесе пынипе паллаштарчĕ. Политканаш членĕсем Ярапайкасси, Уйкас Янасал, Йӳçкасси, Хорнуй, Мăн Сĕнтĕр, Ильинка, Юнкă, Ярославка ял тăрăхĕсенчи пуçламăш уйрăмĕсен парти членĕсен йышне ӳстерессипе тăрăшуллăрах пулмаллине палăртса хăварчĕç.

Л. ПАВЛОВА.

Юбилей

Саламлатпăр

Юратнă аннене, хунямана, ырă кăмăллă асаннене, хисеплĕ тăхлачăна – Муркаш ялĕнче пурăнакан **Людмила Калистратовна ЕГОРОВАНА** сумлă юбилей – 55 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр.

Хаклă та юратнă çыннăмăр! Эсир пурнăçунта тунă ĕçӳ, сирĕн пуян ăс-хакăлу, уçă кăмăлу – пирĕншĕн пысăк телей. Паян эсир хастар, ĕçчен, тăрăшуллă пулнишĕн эпир çав тери савăнатпăр. Мĕн ĕмĕтленни çитсе пытăр, сывлăху çирĕп, утас çулăр такăр пултăр.

Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, хăти тăхлачисем тата çывăх тăванĕсем.